25-мӗш çул тухать. Хакӗ 15 пус.
1942 ДЕКАБРЬ 5 ШАМАТКУН 283 (6218) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!
ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Сталинла Конституци ялавӗпе çӗнтерӳ патне — малалла!

Сталинла Конституцире çырса хунӑ çӗнтерӳсене хӳтӗлесе хӑвартпӑр

Совет Союзӗн çӗнӗ Конституцине йышӑннӑранпа 6 çул тултарнине совет халӑхӗ хаяр вӑхӑтра паллӑ тӑвать. Сталинла Конституцире çырса хунӑ çитӗнӳсемпе çӗнтерӳсем, совет çӗршывӗн вӑйӗпе хӑвачӗ йывӑр тӗрӗслӳ витӗр тухаççӗ.

Аслӑ Конституци хӗвелӗ айӗнче чечекленекен пирӗн юратнӑ çӗршыв çине ултавлӑн килсе тапӑннӑ гитлерла Германие хирӗç 17 уйӑх ытла геройла çапӑçса, совет халӑхӗ хӑйӗн иксӗлми аслӑ хӑватне, хурçӑ пек çирӗп чӑтӑмлӑхне кӑтартса пачӗ. Хӑйӗн историйӗнче халиччен нихçан та пулман чи йывӑр испытание совет халӑхӗ тӳссе ирттерет, мӗнпур асапсемпе инкексем витӗр тухса, ирсӗр тӑшмана вӑл пурӗпӗрех çӗнтерет. Çакна ӑна пирӗн геройла Хӗрлӗ Çар Германин тискер кайӑкла империализмне хирӗç хӑй пӗччен çулталӑк çурӑ патнелле çапӑçса пынӑ хыççӑн, Сталин хулине виçӗ уйӑх паттӑррӑн хӳтӗлесе тӑнӑ хыççӑн, халӗ Сталинград хули районӗнче тата Центральнӑй фронтра вӑйлӑ наступлени пуçласа яни те витӗмлӗн çирӗплетсе парать.

Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци пирӗн çӗршыври халӑхсем хушшинчи танмарлӑха, вӗсем хушшинче патша влаçӗ чӗртсе пынӑ хирӗçӳсемпе харкашусене пӗтерчӗ. Пирӗн çӗршыври мӗнпур халӑхсем пӗр-пӗринпе тӑванла ал парса ӗмӗр-ӗмӗр пӗрле ӗçлеме, пӗрле тӑрса кӗрешме, пӗрле пурӑнма Ленин—Сталин парти ялавӗ айӗнче тупа турӗç. Пирӗн çӗршывра халӑхсен аслӑ çемьи—Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗ ӳссе çитӗнчӗ. Унӑн тинӗсрен тинӗсе çитиччен сарӑлса выртакан анлӑ талккишӗсене Сталинла Конституци хӗвелӗ çутатма тытӑнчӗ. Çав Конституципе пӗрле этемлӗхӗн чи лайӑх ывӑлӗсем ӗмӗр-ӗмӗрех ӗмӗтленни пурнӑçа кӗчӗ. Халӑхсем хӑйсен ирӗклӗхне, телейне, тивлетне, хӑйсен гражданла аслӑ прависене тупрӗç. Совет Союзӗнчи халӑхсен мораллӗ-политикӑллӑ пӗрлӗхӗ никам аркатайми çирӗп ӳссе çитӗнчӗ. Çав аслӑ çӗнтерӳсене пурне те Совет Союзӗн Конституцийӗ çине нихçан тӗксӗмленми ылттӑн саспаллисемпе çырса хунӑ.

Социализмлӑ революци ялавӗ айӗнче Совет Союзӗ аслӑ аталану çулӗ çине тухса, малта пыракан çӗршыв пулса тӑчӗ. Сталин юлташӑн тӑван çӗршыва индустриализацилес политики пӗтӗм экономикӑна хӑватлӑн ӳстермелли тӗп никӗс пулса тӑчӗ. Сталинла Конституци Совет Союзӗн экономикӑллӑ никӗсӗ—хуçалӑхӑн социализмлӑ системи пулса тӑнине тата производствӑн орудийӗсемпе хатӗрӗсем—социализмлӑ харпӑрлӑх пулса тӑнине çирӗплетсе пачӗ. Сталинла индустриализаци политикине пула эпир капиталистла çӗршывсене пӑхӑнса тӑрассинчен хӑтӑлтӑмӑр; ӗлӗк пушхирсем пулнӑ çӗрте фабрикӑсемпе заводсем туса лартрӑмӑр; хамӑр патрах станоксем тӑвакан станоксем тума тытӑнтӑмӑр; хамӑрӑн тӑван Хӗрлӗ Çара малта пыракан техникӑпа хӗçпӑшаллантартӑмӑр; хамӑр патрах самолетсем, танксем, карапсем, моторсем, тупӑсем, нумай тӗрлӗ хӗçпӑшалсем туса кӑларатпӑр. Экономикӑн социализмлӑ системине пула, Сталинӑн индустриализаци политики пурнӑçа кӗнине пула кӑна ӗнтӗ пирӗн тӑван çӗршыв халӗ, отечественнӑй вӑрçӑ кунӗсенче, тӑшманӑн çарне хирӗç çакӑн пек паттӑррӑн çапӑçма пултарать. Нимӗçсем мӗнпур Европӑн техникине тенӗ пек çаратса килсе пире хирӗç янӑ пулин те, Хӗрлӗ Çар тӑшмана халран ярать, юлашкинчен çапса аркатать.

Пирӗн çӗршывра Совет влаçӗ çӗнтернине пула, пирӗн ялхуçалӑхӗ тӗнчери чи малта пыракан социализмлӑ ялхуçалӑхӗ пулса тӑчӗ. Ялхуçалӑхӗнчи социализмлӑ система ӗçхресченӗсен ӗмӗрхи чухӑнлӑхне пӗтерме пулӑшрӗ. Çӗр хӑй те улшӑнчӗ, вӑл ӗлӗкхинчен темиçе хут вӑйлӑрах тырпул, пахарах çимӗçсем пама тытӑнчӗ. Çавна пула ӗнтӗ тӑван çӗршыв халӗ, отечественнӑй вӑрçӑ кунӗсенче, хамӑрӑн геройла Хӗрлӗ Çара çителӗклӗ таран çӑкӑр, сӗт-çу, ашкакай, промышленность валли—чӗрт-авар парса тӑма пултарать. Колхозлӑ ял тӑлпа пуçӗпех аркатса тӑкма çапӑçу хирӗнчи воинсене ӗçлӗн пулӑшса тӑрать.

Совет влаçӗ çӗнтернине пула кӑна пирӗн чӑваш халӑхӗ те, ытти мӗнпур халӑхсем пекех, ирӗке тухса, хӑйӗн пурнӑçӗпе телейне тупрӗ, социализм строительствинче хӑйӗн пысӑк пултарулӑхне кӑтартрӗ. Сталинла Конституци пирӗн чӑваш халӑхне ирӗклӗ ӗç прави, вӗренӳпе кану прависем пачӗ. Совет влаçӗ пулӑшнипе пирӗн халӑх аталану çулӗ çине тухса, экономикӑпа культура тӗлӗшӗнчен малта пыракан халӑхсемпе танлашма пултарчӗ. Совет влаçӗн çулӗсенче чӑваш халӑхӗ, большевиксен партийӗ ертсе пынипе, тӑванла вырӑс халӑхӗ пулӑшнипе Ленинла—Сталинла наци политикине çирӗппӗн пурнӑçа кӗртсе пырса, хӑйӗн республикине чечекленекен республика туса хучӗ. Чӑваш халӑхӗн халӗ ӗнтӗ хӑйӗн аслӑ çӗнтерӗвӗсене палӑртакан хӑйӗн Конституцийӗ пур. Çавна пула чӑваш халӑхӗн ывӑлӗсем отечественнӑй вӑрçӑ фрончӗсенче, пирӗн çӗршыври мӗнпур халӑхсен ывӑлӗсемпе пӗрле аллӑн тӑрса, фашистла захватчиксене хирӗç паттӑррӑн çапӑçаççӗ.

Пирӗн земляк, Совет Союзӗн Геройӗ майор Ф. Н. Орлов пирӗн хаçатра кӑçалхи Октябрь уявӗ кунӗнче тухнӑ çырӑвӗнче çапла çырнӑччӗ:

«Пуçран пӗр шухӑш нихçан та тухма пӗлмест. Çав шухӑш вӑл боевой задачисене пурнӑçа кӗртсе килнӗ хыççӑн кӑшт сывлӑш çавӑрнӑ чухне те, сывлӑшра тӑватӑ моторлӑ хӑватлӑ карапра вӗçсе пынӑ чухне те, ку çеç те мар, чи йывӑр самантсем килсе тухнӑ чухне те хӗлхем пек çиçсе илет: — Кам пулнӑ пулӑттӑм-ши эпӗ, революци, Совет влаçӗ пулман пулсан? Мана Совет влаçӗ кӑна ӑмӑрткайӑкӑннинчен те хӑватлӑрах çунатсем пачӗ-çке».

Çапла Совет влаçӗ, Сталинла Конституци чӑваш халӑхӗн ывӑлӗсене хӑватлӑ çунат, иксӗлми паттӑрлӑх пачӗ. Вӗсем хамӑрӑн тӑван çӗршыва хӑйсен чӗрине хӳтӗленӗ пек хӳтӗлеççӗ; вӗсем Орденлӑ Чӑваш республикин чысне çӳлте тытаççӗ, вӗсем Сталинла Конституци хӗвелӗ айӗнче пурӑнса курнӑ телейлӗ пурнӑçа нихçан та, никама та памаççӗ.

Нимӗç захватчикӗсене хирӗç пыракан çапӑçусенче геройлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн Чӑваш çӗршывӗнче çуралса ӳснӗ 864 çынна орденсемпе медальсем панӑ; чӑваш халӑхӗ пӑхса çитӗнтернӗ Ефимов, Орлов, Васильев, Габайдулин юлташсем Совет Союзӗн Геройӗсем пулса тӑчӗç.

Чӑваш республикинчи ӗççыннисем хӑйсен фронтри паттӑр ывӑлӗсене тивӗçлӗ пулассишӗн кӗрешеççӗ, вӗсем фабрикӑсемпе заводсенче, колхозсенче пирӗн аслӑ çӗнтерӗве туптаççӗ. Вӑйлӑ тырпулшӑн пыракан Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура Чӑваш республики паха çитӗнӳсем турӗ, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе тата машинно-тракторнӑй станцисем енӗпе пирӗн республика Оборонӑн Государственный Комитечӗн Хӗрлӗ ялавне илме кандидата тӑма тивӗçлӗ пулчӗ. Республикӑри ӗççыннисем государство умӗнчи обязательствӑсене вӑхӑтра татса пынипе, самолетсен звенисене, танксен колоннисене тума укçа-тенкӗ пуxнипе, Хӗрлӗ Çар воинӗсем валли ӑшӑ тумтирсем пуxнипе фронта куллен ӗçлӗн пулӑшса тӑраççӗ. Çак пулӑшӑва пирӗн татах та ытларах вӑйлатмалла.

Сталинла Конституцире çырса хунӑ çӗнтерӳсене эпир хӳтӗлесе хӑваратпӑрах. Пирӗн çӗнтерӗвӗн шанчӑкӗ вӑл—пӗтӗм тӑван çӗршыв, пӗтӗм совет халӑхӗ Ленин—Сталин ялавӗ айӗнче пӗтӗçсе, пӗр боевой лагерь пулса тӑни, Хӗрлӗ Çарӑн воинӗсем тӑшмана паттӑррӑн аркатса пыни, вӗсем Сталинград хулин районӗнче тата Центральнӑй фронтра хӑватлӑ наступлени пуçласа яни, Совет Союзӗн пӗтӗм тӗнчери çыхӑнӑвӗсем çирӗпленсе пыни, тӗнчери демократиллӗ çӗршывсен гитлеризма хирӗçле коалицийӗ çирӗпленсе пыни, пирӗн хӗçпӑшаллӑ вӑйсене, пирӗн пӗтӗм халӑха аслӑ полководец Сталин юлташ ертсе пыни пулса тӑрать.

Совет халӑхӗ çак аслӑ кӗрешӳре çӗнтерет. Сталин юлташ: «Пирӗн урамра та праçник пулать!» тесе каланӑ сӑмахсем пурнӑçа кӗреççӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Декабрӗн 3-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Декабрӗн 3-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем **Сталинград хули районӗнче тата Центральнӑй фронтра**, противник вӑйлӑн хирӗç тӑнине сирсе пырса, малтанхи еннеллех наступлени туса пынӑ.

Декабрӗн 2-мӗшӗнче Сталинград районӗнче пирӗн летчиксем нимӗçсен 50 самолетне, çав шутра виçӗ моторлӑ 40 транспортнӑй самолетне, пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Декабрӗн 2-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаçӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗçсен 10 танкне тата войскӑсемпе тӗрлӗ грузсем тиенӗ 50 автомашинине çити пӗтерсе тӑкнӑ, артиллерин 6 батарейине пусарса лартнӑ, противникӑн пехотине пӗр батальон таран сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинградӑн заводсем вырнаçнӑ районӗнче пирӗн подразделенисем нимӗçсене темиçе суртран хӑваласа кӑларнӑ тата вӗсен салтакӗсемпе офицерӗсене пӗр ротӑна çити пӗтерсе тӑкнӑ. Хулан кӑнтӑр хӗрринче пирӗн чаçсем темиçе хут хаяррӑн çапӑçнӑ хыççӑн противникӑн тӗреклетнӗ пунктне йышӑнса илнӗ, çав пункт вӑл нимӗçсен группировкин флангне хӳтӗлесе тӑнӑ пулнӑ. Çапӑçу хирӗнче тӑшманӑн çӗршер вилли выртса юлнӑ. Пирӗннисем трофейӑсем тытса илнӗ тата тыткӑна илнӗ.

* * *

Сталинградран çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре Дон шывӗн сулахай хӗрринче, Мишинский юлташ командир пулса тӑракан чаçӑн боецӗсем Грановский юлташ ертсе пыракан танкистсемпе пӗрле пӗр вӑйлӑ тӗреклетнӗ высотана атакӑланӑ. Нимӗçсем питех те хаяррӑн хирӗç тӑнӑ. Штык вӗççӗн тӑрса çапӑçнипе вӗçленнӗ çав хаяр çапӑçу хыççӑн пирӗн боецсем вӑл высотана тытса илнӗ. 300 гитлеровеца ытла вӗлернӗ, 5 орудие тата 10 блиндажа вӗсен гарнизонӗсемпе пӗрлех пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинградран кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн чаçсем уйрӑм участоксенче наступлени туса пынӑ. Тӑшманӑн 1.200 салтакӗпе офицерне çити, 13 танкӗпе бронемашинине, 90 автомашинине, 8 минометне, 23 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ, 28 дзочӗпе 52 блиндажне ишӗлтернӗ. Ытти участоксенче пирӗн чаçсем разведка тунӑ тата противникӑн вак групписене пӗтерсе пынӑ.

* * *

Центральнӑй фронтра пирӗн войскӑсем наступлениллӗ операцисем туса пынӑ. Великие Луки хулинчен хӗвелтухӑçнерехре совет чаçӗсем, противникӑн йышлӑ контратакисене сире-сире ярса, унӑн опорнӑй пункчӗсене пӗтерсе пынӑ. Н-ски чаçӑн боецӗсем пӗр кун хушшинче нимӗçсен 600 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Çав çапӑçура старши сержант Душкин орудипе тӳррӗн тӗллесе персе нимӗçсен 4 танкне çӗмӗрнӗ.

Ржевран хӗвеланӑçнерехре пирӗн чаçсем, противник вӑйлӑн хирӗç тӑнине сире-сире ярса, малалла куçса пынӑ. Н-ски часть нимӗçсен вӑйлӑ тӗреклетнӗ вырӑнне татнӑ та, чугунçул патне тухса, чугунçул станцине тытса илнӗ. Пирӗн тепӗр часть нимӗç захватчикӗсенчен халӑх пурӑнакан темиçе пункта тасатнӑ. Çавӑн чухне 6 танк, 150 автомашина тата противникӑн 1000 салтакӗпе офицерне çити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Смоленск облаçӗнче кӗрешекен партизансен отрячӗ ноябрь уйӑхӗнче темиçе ӑнӑçлӑ операци туса ирттернӗ. Партизансем 85 нимӗç салтакӗпе офицерне вӗлернӗ, 2 грузовой тата пӗр çӑмӑл автомашина, 2 мотоцикл, 5 лав пӗтерсе тӑкнӑ тата телефон линине пӗр километр тӑршшӗ пӑсса хунӑ. Смоленск облаçӗнчи партизансен тепӗр отрячӗ нимӗçсен салтакӗсене фронт патне илсе пыракан икӗ поездне ӳпӗнтерсе янӑ.

* * *

Сталинград районӗнче нимӗçсен 305-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи салтаксен пысӑк ушкӑнне тыткӑна илнӗ. 2?-мӗш артиллери полкӗнчен тыткӑна лекнӗ салтак Гюнтер Вальц çапла каласа панӑ: «Нумай салтаксем октябрь уйӑхӗнчех сивӗпе хытӑ аптӑранӑ. Офицерсем пире çапла каласа йӑпататчӗç: командовани иртнӗ хӗллехи уроксене шута илнӗ, кӑçал салтаксене хӗлле мӗн кирлине пурне те парӗç, тетчӗç. Эпир пӗр ӳпкелемесӗр кӗтсе тӑтӑмӑр. Ноябрь уйӑхӗ пуçламӗшӗнче пире эпир нумайччен кӗтсе тӑнӑ хӗллехи тумтире пама тытӑнчӗç. Салтаксем шанса тӑни ахалех пулчӗ. Пире кивӗ перчаткӑсем, шлем айне тӑхӑнмаллисем—кивелсе кайнӑскерсем тата хырӑм çине çакмаллисем пачӗç. Кашни взвод пуçне 5-шер мӑшӑр эрзац-çӑматӑ—улӑмран тунӑ ботинкӑсем, йывӑç потушаллӑскерсем, е улӑмран тунӑ çӑпатасем, гудронпа витнӗ патушаллӑскерсем—пачӗç. Çӑматӑ тесе ят панӑ çак япаласем пӗрех те ӑшӑтмаççӗ тата вӗсемпе çӳреме те кансӗр. Поста кайнӑ чухне салтаксем одеялпа пӗркенеççӗ, унта вара пахчари мӗлкесем пек тӑраççӗ. Салтаксем халӗ çапла калаççӗ: «Пире тата тепӗр хут улталарӗç. Нимӗç çарӗ хӗле кӗме лайӑх хатӗрленнӗ тесе каласа ӗнентерни пире пӗр хисеплемесӗр улталани çеç пулчӗ. Пире улталарӗç, вилмелле туса хучӗç. Кам çапӑçуран чӗррӗн тухать—вӑл сивӗпе шӑнса вилет, вырӑссен юркӗрчӗсен айне пулать», — теççӗ.

Декабрӗн 4-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Декабрӗн 4-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле **Сталинград районӗнче тата Центральнӑй** фронтра пирӗн войскӑсем малтанхи еннеллех наступлени туса пынӑ.

* * *

Сталинградӑн заводсем вырнаçнӑ районӗнче пирӗн войскӑсем противник çине персе тӑнӑ тата разведка тунӑ. Н-ски чаçӑн артиллерисчӗсем нимӗçсен 8 дзочӗпе блиндажне ишӗлтернӗ, 3 орудине, 15 пулеметнӑй точкине тата пӗр ротӑна çити пехотине пӗтерсе тӑкнӑ. Гвардеец-минометчиксем, сасартӑк вӑйлӑн пере-пере ярса, противникӑн пӗр çӗре пухӑнса тӑнӑ пехотипе автомашинисене сапаласа янӑ.

* * *

Сталинградран çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн войскӑсем хӑйсен пӗр пайӗпе наступлениллӗ çапӑçусем туса

Вӗçӗ 2-мӗш страницӑра.

Сталинградран çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре

Пирӗн чаçсем тӑшмана хӗссех пыраççӗ

Дон шывӗн хӗвелтухӑç çыранӗнче, противникӑн оборони ӑшӗнче шалта, кӗрешекен пирӗн войскӑсем тӑшмана пӗр чарӑнмасӑр хӗссе пыраççӗ. Хӑйӗн арканнӑ чаçӗсене йӗркене кӗртес, пухса пӗтӗçтерес шутпа, сывлӑш çулӗпе те пулин боеприпассем тата продовольстви илсе тӑрас шутпа, нимӗçсем хӑйсем йышӑнса тӑракан вырӑнсенче тытӑнса юлас тесе хаяррӑн çапӑçаççӗ. Çеçенхирти кашни тӗмескене противник çирӗплетме тӑрӑшать. Анчах тӑшманӑн чаçӗсене флангсенчен çавӑрса илсе, вӗсем хушшине савӑлланса кӗрсе, противникӑн тылне танксен десанчӗсене кӗрте-кӗрте ярса, пирӗн войскӑсем малаллах куçаççӗ.

Совет Информаци Бюровӗ пирӗн войскӑсем Дон шывӗн хӗвелтухӑç çыранӗнче нимӗçсен оборонин пысӑк узелне тытса илни çинчен, Вертячий, Песковатка, Сокаревка, Илларионовский ятлӑ çирӗплетнӗ пунктсене йышӑнса илни çинчен пӗлтернӗччӗ. Пирӗн войскӑсем противника Донӑн хӗвеланӑç çыранӗнче вӑйлӑн пырса çапнӑ вӑхӑтра противника çав пунктсем тӗлӗнчех хӗвелтухӑçӗнчи çыранра хӗссе лартнӑ пулнӑ. Кун хыççӑн вара нимӗçсене çурçӗрпе çурçӗр-хӗвелтухӑç енчен сасартӑк тылран пырса çапнӑ. Саперсемпе артиллеристсем тата минометчиксем умри чӑрмавсене сирсе пӑрахса çул тусан, пирӗн пехота, танксенчен уйӑрӑлмасӑр, çав çулсемпе малалла ывтӑннӑ.

Нимӗçсем çухалса кайнӑ, вӗсем пирӗн боецсене чарса лартас тесе, хӑйсен вӑйӗсене унта та кунта сапалама тытӑннӑ. Çав вӑхӑтра пирӗн пехота тӳрех пырса çапса пӗр высотана йышӑнса илнӗ те, унта çирӗпленсе ларнӑ, çапла вара пирӗн резервсене малалла куçма хӳтӗлӗх туса панӑ.

Тӑшман хаяррӑн персе хирӗç тӑнӑ пулин те, Павленко юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделени тӑшман оборонин тӗреклетнӗ пункчӗсенчен пӗрине пуринчен малтан çӗмӗрсе кӗнӗ, штык вӗççӗн тӑрса çапӑçса вара унта пытанса ларнӑ нимӗçсене пӗтӗмӗшпе тенӗ пекех вӗлерсе пӗтернӗ. Противника вакӑ ушкӑнсене уйӑрса, вӗсене пӗрерӗн-иккӗрӗн пӗтере-пӗтере тӑкса, пирӗн войскӑсем кун каçиччен хирӗç тӑмалли çирӗплетнӗ пысӑк узела тӑшманран пӗтӗмӗшпех тасатнӑ. Гитлеровецсем йывӑр çухатусем тӳснӗ.

Тӑшман халӑх пурӑнакан пунктсенче тытӑнса юлма хӑтланать. Атӑл тӑрӑхӗнчи çара çеçенхире тухни гитлеровецсемшӗн питех те хӑрушла ӗç пулнӑ пулӗччӗ. Ирхине ирех хӗвеланӑçӗнчен наступлени туса пыракан пирӗн чаçсенчен пӗри, тӑшманӑн халӑх пурӑнакан пункта хӳтӗлеме тӑратнӑ çеçенхирти боевой хуралне пӗтерсе тӑкса, тӑшман патне шала çӗмӗрсе кӗнӗ. Тӑшмана пӗр вӑхӑтрах икӗ енчен пырса çапнӑ. Çапӑçу кашни çуртшӑн, кашни хуралтӑшӑн пынӑ. 290 çын ытла вилсе пӗтсен, гитлеровецсем тарнӑ. Пирӗннисем пуян трофейӑсем тытса илнӗ.

Çитӗнӳсемпе хавхаланнӑ пирӗн воинсем паттӑрлӑхпа хастарлӑхӑн тӗслӗхӗсене кӑтартаççӗ. Дон патӗнче халӑх пурӑнакан пӗр пункта йышӑнса илнӗ чухне танковӑй десантра пулнӑ сержант Гурихин хӑйӗн боецӗсем умӗнче пынӑ, гитлеровецсене пӗр хӗрхенмесӗр пӗтере-пӗтере тӑкнӑ. Пӗр суртран нимӗçсем тухнӑ та каялла тарма тытӑннӑ. Гурихин ун хыççӑн хӑваласа чупса, вунӑ гитлеровецӑн ункине пырса лекнӗ. Сержант çухалса кайман.

— Парӑнӑр!—тесе кӑшкӑрнӑ вӑл хаяррӑн, унтан автоматран çӳлелле пенӗ.

Хӗçпӑшаллӑ вунӑ гитлеровец аллисене çӗклесе тыткӑна парӑннӑ. Тепӗр сехетрен Гурихин сержанта генерал патне чӗнтернӗ.

— Акӑ сана награда, хӑюллӑ паттӑр!—тенӗ генерал, Гурихин гимнастерки çумне «За отвагу» медале çакса.

— Служу Советскому Союзу! тесе ответленӗ те сержант, татах çапӑçӑва кайнӑ.

М. РОЗОВСКИЙ.

Çулӑмлӑ çырусем

Фронтран пирӗн пата куллен вуншар çыру килсе тӑрать. Фронтовиксем çав çырусенче хӑйсен тата кӗрешӳри тусӗсен паттӑр ӗçӗсем çинчен каласа параççӗ, çакӑнпа пӗрлех вӗсем орденлӑ Чӑваш республикинчи ӗççыннисене фронта татах та вӑйлӑнрах пулӑшса пыма чӗнеççӗ. Куллен ӳссе, çирӗпленсе пырать фронтпа тыл хушшинчи çыхӑну. Фронт—тыла, тыл—фронта хавхалантарать. Çапӑçу хирӗнчен килнӗ çырусем пысӑк мар, анчах вӗсем хӗрӳллӗ çулӑмпа çунса тӑраççӗ. Акӑ вӗсем:

1. ТӐВАН ЧӖЛХЕПЕ

Каçхине, кӑнтӑрлахи вӗренӳсем хыççӑн, çӗр пӳртре пӗтӗм подразделенири боецсемпе кӗçӗн командирсем— чӑваш халӑхӗн ывӑлӗсем пухӑнчӗç. Вӗсем пӗр-пӗринпе паллашаççӗ, юлташӗсенчен вӗсем тӑшмана хирӗç мӗнле çапӑçни çинчен ыйтса пӗлеççӗ, кашни кунхи ӗçсем çинчен, тӑван çӗршывран килнӗ çӗнӗ хыпарсем çинчен ыйтса пӗлеççӗ. Земляксене çакӑн пек пӗр çӗре пухса паллаштарнӑшӑн пурте командованине тав тӑваççӗ.

Паян вӗсем Сталин юлташ Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци XXV çул тултарни çинчен тунӑ доклада тата унӑн ноябрӗн 7-мӗшӗнчи приказне чӑвашла каласа панине итлеме пухӑннӑ.

Палӑртнӑ сехетре лейтенант Л. Агаков, чӑваш, тӑван чӗлхепе каласма тытӑнать. Вӑл çулпуçӑн докладне вуласа ӑнлантарса парать. Боецсем питӗ тимлӗн итлеççӗ. Ыйтусем пулсан, çавӑнтах ыйтса пӗлсе тивӗçлӗ ответ илеççӗ.

Калаçу 2 сехете яхӑн пычӗ, анчах итлесе ларакансенчен нихӑшӗ те ывӑннине туймарӗ. Юлашкинчен боецсем пурте пӗр çын пек пулса çапла каларӗç: пирӗн аслӑ çулпуç лартнӑ задачӑсене эпир халӗ ӗнтӗ вӗçне çитиех ӑнланса илтӗмӗр, терӗç. Вӗсем тӑван çӗршыв умӗнчи хӑйсен тивӗçне чыслӑн пурнӑçлас тесе, совет çӗрне гитлерла ирсӗрсенчен тасатас тесе пӗтӗм вӑя хурса кӗрешме пулчӗç.

Старши лейтенант И. ПАВЛОВ.

2. СИРӖН ПАРНЕСЕНЕ ИЛТӖМӖР.

Эпир çак кунсенче чӑваш ӗççыннисенчен паха кучченеççем илтӗмӗр. Чӑваш ӗççыннисем хӑйсем шефа илнӗ чаçри фронтовиксем патне Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци XXV çул тултарнӑ ятпа кучченеççем ярса панӑ.

Çак парнешӗн эпир, красноармеецсемпе командирсем тата политработниксем, чӑваш халӑхне тав тӑватпӑр. Чӑваш халӑхӗ фронта пулӑшнӑшӑн, чӑваш колхозникӗсем çӗнтерӳ тӑвас тӗллевпе тылра тӑрӑшса ӗçленӗшӗн эпир, фронтри чӑвашсем, савӑнатпӑр. Эсир пирӗншӗн тӑрӑшни пире кӗрешӳре ектӗр пулма, нимӗçсене пӗтӗм хураймандлӑхпа çӗмӗрсе тӑкма хавхалантарать. Эпир кашни кунхи ӗçре ялан хастарлӑх тимлӗ пулма, нимӗç фашисчӗсене пӗтерсе тӑкассишӗн пӗтӗм вӑй-хала хурса кӗрешме чӑваш ӗççыннисене сӑмах паратпӑр. Нимӗç тискер-кайӑкӗсене хамӑрӑн тӑван çӗре таптама памӑпӑр, вӗсене совет çӗршывӗнчен хӑваласа кӑларса, çӗнтерӳпе киле таврӑнӑпӑр, каллех колхоза пырса культурӑллӑ та пуян пурнӑçпа пурӑнма тытӑнӑпӑр.

Фронтовик, ВКП(б) членӗн кандидачӗ А. И. ИВАНОВ.

3. ЭСИР МӖНЛЕ ӖÇЛЕНИНЕ ЭПИР САНАСАХ ТӐРАТПӐР

Паян эпир пирӗн Чӑваш республикинчи колхозниксемпе колхозницӑсем хӑйсен задачине ӑнӑçлӑн пурнӑçласа пыни çинчен хаçатра вуларӑмӑр. Эпир çуралнӑ республика тырпулсене хӑвӑрт пухса кӗрсе фронта пулӑшать, çакӑ пире, фронтовиксене, савӑнтарать.

Тӑван республика лайӑх ӗçленине курса, эпир те совет çӗрне нимӗç фашисчӗсенчен пӗтӗм вӑя хурса сыхласа тӑратпӑр. Эпир, Çурçӗр флотӗнчи чӑваш ачисем, ытти халӑхсен ывӑлӗсемпе пӗрле, тӑшмана хирӗç паттӑррӑн вӑрçатпӑр. Партипе правительство тата тӑван çӗршыв пире шанса панӑ хӗçпӑшалпа пӗлсе усӑ куратпӑр. Манӑн кӗрешӳри ӗçсене партипе правительство пысӑк хак пачӗç, эпӗ «За боевые заслуги» медаль илме тивӗçлӗ пултӑм. Тӑшмана хирӗç малашне те пӗтӗм вӑя хурса çапӑçма пулатӑп, сире те хӑвӑрӑн задачӑсене хӑвӑрт пурнӑçласа пыма чӗнетӗп.

Курсант, ВКП(б) членӗн кандидачӗ П. Н. ПИККАЙ.

4. ТӐШМАН ЧӖТРЕСЕ ТӐТАР

Эпир Н-ски училищӗре Хӗрлӗ Çарӑн çӗнӗ специалисчӗсем — ӑста воинсем пулма хатӗрленетпӗр. Чӑваш республикинчен килнӗ курсантсем вӗренӳре хӑйсен пысӑк пултарулӑхне кӑтартаççӗ. Вӗсем, Сталин юлташӑн 345-мӗш номерлӗ приказӗпе хавхаланнӑскерсем, «отлично» та «хорошо» паллӑсемпе кӑна вӗренме пуçларӗç. Л. Михайлов, Лукин, Мурзаев, Краснов, М. Михайлов тата Чӑваш республикинчен килнӗ ытти курсантсем вӗренӳре пур енӗпе те малта пыраççӗ. Вӗсене командовани темиçе хутчен те тав тунӑ.

Пирӗн пӗр ӗмӗт — хӑвӑртрах вӗренсе тухса алла хӗçпӑшал тытасси. Эпир çапӑçу хирӗнче те чӑваш халӑхӗн ятне ӳкермӗпӗр. Тӑшман чӗтресе тӑтӑр!

Курсант Н. ГРИГОРЬЕВСКИЙ

С. М. Киров ячӗпе—паровозсен колонни

КАНАШ. («Чӑваш Коммуни» корр.). Сергей Миронович Киров юлташа фашизмӑн троцкистла-зиновьевла тарçисем ирсӗррӗн персе вӗлернӗренпе 8 çул тултарнине асӑннӑ май, Хусан чугунçулӗн Канаш деповӗнче паровозсен С. М. Киров ячӗпе тӑракан колоннине тунӑ. Колоннӑра 3 паровоз. Машинистсем—орденоносец Леонид Николаев тата Соловьевпа Тимофеев юлташсем. Вӗсем пурте лайӑх тӗслӗхсем кӑтартса, ССР Союзӗн паллӑ машинисчӗн Лунин юлташӑн меслечӗпе ӗçлеççӗ.

Колоннӑна тунӑранпа машинист Соловьев юлташ 1.500 тоннӑллӑ поезда Канашран Сергача çитиччен илсе кайнӑ, Сергачран тепӗр йывӑр тиевлӗ поезда илсе çитернӗ. Вӑл ун чухне поезда çӳретмелли техникӑллӑ хӑвӑртлӑха кашни сехетрех 1—2 километр чухлӗ ӳстерсе пынӑ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Воронеж фрончĕ). Чаплă полководец ывăлĕ—майор орденоносец **А. В. Чапаев** нимĕç оккупанчĕсемпе хастарлăн та пĕлсе çапăçать. Вăл командир пулса ертсе пыракан подразделенин орудийĕсем гитлеровецсене аркатмаллах çапаççĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Майор орденоносец А. В. Чапаев (сылтăмри) В. Я. Балашов лейтенантăн комсомолецăн артиллери батарейин огневой позицийĕнче. Çак батарея юлашки çапăçусенче 4 дзота, 2 станковăй пулемета, автомашинăна, 2 лава тата наблюдательнăй пункта пĕтерсе тăкнă, 4 станковăй пулемета, артиллерин 2 батарейине тата минометсен 4 батарейине пусарса лартнă, противникăн 20 автомашинине тата 8 лав не сапаласа янă.

Я. ПАВОЛОЦКИЙ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 4-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

...ывнă, темиçе участокра противникăн контратакисене сирсе тăнă. Нимĕç пехотин батальонĕ 5 танк пулăшса пынипе Н-ски подразделенин позицийĕсене атакăланă. Çапăçу пуçланса кайнă, вăл штык вĕççĕн тăрса çапăçнипе вĕçленнĕ: Пирĕн боецсем тăшмана каялла çавăрса янă тата 150 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Икĕ çĕмрĕк танк, 5 оруди, 10 автомашина, 42 лав тата 2 радиостанци тытса илнĕ. Красноармеец Егоров юлташ тата сержант Петухов юлташ пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе противникăн 3 моторлă транспортнăй самолетне ӳкернĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем активлăн çапăçнă. Н-ски часть темиçе дзотпа блиндажа нимĕçсенчен тасатнă, тăшманăн 300 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Противник хăйĕн çухалнă позицийĕсене каялла тавăрма икĕ хутчен хăтланса пăхнă, анчах та ăна каялла сирсе янă. Ытти участоксенче пирĕн подразделенисем çапăçса пырса разведка тунă тата гитлеровецсене пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем наступлени тунă тата противникăн контратакисене сирсе тăнă. Ржевран хĕвеланăçнерехре Поветкин юлташ ертсе пыракан чăçсем виçĕ кун хушшинче нимĕçсен 5 танкне, 7 бронемашинине, 9 орудине тата 12 минометне пĕтерсе тăкнă. Противникран 24 оруди, 10 миномет, 164 пулемет, 900 винтовкăпа автомата ярăн, 60 автомашина ытла, 8 радиостанци, 9 склад тата пĕр миллиона яхăн патрон тытса илнĕ. Çав çапăçусенче противникăн темиçе пин салтакĕпе офицерĕ вилнĕ е аманнă. Ржев—Вязьма чугунçулĕн районĕнче пирĕн подразделенисем противникăн контратакине сирсе ярса, нимĕçсен пехотине икĕ рота таран пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕрте пирĕн çыранри артиллери противникăн пĕрле 16 пин тонна водоизмещениллĕ шутланакан 2 транспортне путарнă.

* * *

Орел облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ противникăн 3 поездне ӳпĕнтерсе янă. 3 паровоз, 30 вагон, 15 платформа çĕмĕрĕлнĕ, çав платформăсенчен улттăшĕ çинче орудисем пулнă. Крушени вăхăтĕнче 140 нимĕç салтакĕпе офицерĕ вилнĕ. Орел облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ 200 гитлеровеца çити вĕлернĕ тата вĕсен хĕçпăшалĕсене пуçтарса илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра нимĕçсен 216-мĕш пехотнăй полкĕнчи салтаксен пĕр ушкăнне тыткăна илнĕ. Тыткăна лекнĕ обер-ефрейторсем Вилли Зипманпа Густав Штимбауэр тата салтак Генрих Коен çапла каласа панă: «Çуллапа кĕркунне эпир укрепленисем турăмăр тата хĕллехи çапăçусене хатĕрлентĕмĕр. Апла пулсан та вырăссем наступлени туни пирĕншĕн кĕтмен çĕртен сиксе тухнă япала пек пулчĕ. Вырăссен артиллерийĕпе йывăр танкĕсем пирĕн позицисене питех те нумай аркатрĕç. Пирĕн батальонри салтаксем чăтаймасăр тарса саланчĕç. Офицерсем пире—çĕр чавса ларсан чăтса тăма пулать, тесе калатчĕç. Вырăссем наступлени туни çав шанчăка сапаласа ячĕ. Халĕ ĕнтĕ вырăссем пире çапăçăва кĕрте-кĕрте ярассине, пире канăç парас çуккине пурте ăнланаççĕ. Нумаях пулмасть ротăсенче Гитлерăн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма хушакан приказне вуласа пачĕç. Çав приказа эпир Центральнăй фронтри нимĕç войскисене вĕлермелли приговор йышăннă пек ăнланса итлерĕмĕр».

Конституци кунне тухăçлă ĕçпе паллă тăваççĕ

КАНАШ, декабрĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Вагонсем юсакан заводри малта пыракан бригадăсемпе рабочисем Сталинла Конституци кунне ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемпе паллă тăваççĕ. Вагонсем тăвакан цехри столярсен Фадеичев юлташ ертсе пыракан бригади смена нормине декабрĕн малтанхи кунĕсенче 4 хут ирттерсе тултарнă. Бригадăн ĕç пахалăхĕ те аван. Çавăн пекех, автоматчиксен Базаров юлташ ертсе пыракан бригади те кунсерен çĕнĕр норма тултарса ĕçлет. Икĕ бригадăран кая мар ĕçлеççĕ вагонсем тăвакан цехри Выçоцкий, Кованов тата Дмитриев бригадисем те.

Уйрăмах пысăк ĕç тухăçлăхне стахановсемпе опытлă рабочисем кăтартаççĕ. Конституци кунне тивĕçлĕн паллă тăвассишĕн кĕрешсе, вĕсем çак кунсенче нормăна 3—4 хут ирттерсе тултараççĕ. Декабрĕн 3-мĕшĕнчи заданине инструментальнăй цехри стахановец Нурмухамедов юлташ 405 процент, инструментальнăй цехри опытлă фрезеровщик Осипов 300 процент, токарь Бухтуяров—275 процент тултарнă.

Декабрĕн 5-мĕшĕнче, вăсхине, Сталинла Конституци кунĕ ячĕпе заводри комсомолецсемпе çамрăксен пухăвĕ пулать.

Г. СОРОКИН,
Заводри партбюро секретарĕ.

Н-ски заводра

Н-ски завод коллективĕ Сталинла Конституци ячĕпе илнĕ обязательствисене пĕтĕмпех пурнăçа кĕртнĕ. Коллектив иртнĕ уйăхри производство программине 112 процент тултарнă. Плана пур иртерсе фронта çĕршыва темиçе пин тенкĕлĕх продукци панă. Ноябрь уйăхĕнче завод çĕнĕ ышши продукцин малтанхи партине туса кăларнă. Çĕнĕ продукци пахалăхĕ начар мар.

Тĕп цехсенчен ноябрь уйăхĕнче Кинбургскипе Цфасман юлташсем ертсе пыракан цехсем лайăх ĕçленĕ. Графика кашни кун пăхăнса ĕçлесе, вĕсем уйăхри плана 13—14 процент ирттерсе тултарнă. Ку цехсем халĕ те ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пымассăр.

Хатĕрлекен цехсенчен иртнĕ уйăхра Просик юлташ начальник пулса тăракан цех пысăк тухăçлăх кăтартнă. Вăл уйăхри плана 133 процент тултарса, плана ирттерсе, сахал мар продукция панă. Трабскинпе Златопольский юлташсем ертсе пыракан цехсем те уйăхри плана тухăçлăрах ĕçленĕ.

Çак кунсенче Н-ски заводри рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем çĕнĕ çĕнтерӳсемшĕн ĕçлеççĕ. Хĕрлĕ Çарăн отечественнăй вăрçă фронтри паттăр боецĕсемпе командирĕсене тивĕçлĕ çитĕнӳсемпе, продукци туса кăларассине ӳстерсе пыраççĕ.

Сталинла Конституци çирĕплетсе панă ирĕклĕ ĕçре

Пирĕн колхоз членĕсем кăçал вăйлă тырпул туса илессишĕн фронтри пек хастарлăн кĕрешрĕç. Колхозниксем пĕтĕм ĕçе фронта пулăшас кăмăлпа туса пычĕç. Кашни колхозник колхозниксен ĕçне ... Краснова, Петрова, Степанова колхозницăсем ... нормине 180—200 процент таран тултарса пычĕç.

Сталинла Конституци çирĕплетсе панă ирĕклĕ ĕçре пирĕн колхоз тухăçлăхне татах та ӳстерчĕ. Иртнĕ çул вăтам шутпа гектартан ыраш 14,6 центнер туса илнĕ пулсан, кăçал унăн тухăçлăхĕ 18,3 центнер туса пулчĕ. Иртнĕ çул çĕр гектартан 6,3 центнер пулнă, кăçал 12,3 центнер пулчĕ. Ирĕклĕ ĕçпе колхозниксен дисциплини çирĕпленчĕ. Тырпулсене ... хăвăрт вырса кĕртрĕç, сапма пачĕç.

Малтанах чи таса тырра эпир государствăна патăмăр. Хĕрлĕ Çарăн тыл фондне хывăрăмăр. Государство умĕнчи пур обязательствисене те колхоз срокчен парса татрĕ. Вăйлă-вăйлă ĕрчетмелли 1942 çулти плана ирттерсе пурнăçларĕ.

Стахановла ĕçпе результачĕсем колхоз илнĕ тулăшра курăнаççĕ. Кăçал пирĕн колхозниксем хăйсен ĕçкунĕ çине 3,75 килограмм тĕштырă тата икшер ...

... тенĕ укçан илеççĕ. Çакă вăл пирĕн колхозниксен пуян та культурăллă пурнăçне малалла лайăхланса пынине кăтартать. Сталинла Конституци пирĕн пурнăçа ...

Ирсĕр тăшман пирĕн телейлĕ пурнăçа ... пирĕн телее. Ĕçпе кĕрешӳре тунă пуян пурнăçа тăшмана эпир парас çук. Хĕрлĕ Çар пирĕн патăр çав шухăшĕсене ... çĕнтерӳллĕ наступлени туса пынине ... 1943 çулта татах та ... пирĕн колхозниксем ... государствăна ... тума пулассе. Эпир килес çул ... тăвассине тăваççĕ ... пырăпăр ... ӳкерне ... тăрăшатпăр. Сурăх ... ӳстерме пурнăçлатпăр.

Хĕрлĕ Çарăн паттăр эпир боецĕсене валли пирĕн колхозниксем 7 килограмм çăм, 9 тăрăх, çăм алшишсемпе чăлхасем татах та шантаратăп яраççĕ. Кăна эпир тума палăртнă государствăна ... ăшă-кака ... сĕт-çу ярса патăмăр. Халĕ эпир ... çĕнĕ пурăнма хатĕрлетпĕр.

М. КРАСНОВ,
Етĕрне районĕнчи «Комсомол» колхозăн председателĕ.

Государствăна тырă параççĕ

Элĕк районĕнчи колхозсем Сталинла Конституци кунне государство умĕнчи парăмсене парса татнипе паллă тума тăрăшаççĕ. Жданов ячĕпе, Киров ячĕпе тăракан тата ытти нумай колхозсем государствăна тырă, аш-какай, сĕт-çу парса татрĕç. Хĕрлĕ Çарăн фондне нумай тырă хыврĕç.

Декабрĕн 3-мĕшĕнче районри 45 колхоз хĕрлĕ обозсем туса хатĕрлев пунктне 935 центнер тырă леçрĕç. Ĕнер 204 лав ытла тырă леçнĕ.

Т. ФИЛИМОНОВ,
Райсовет Исполкомĕн председателĕ.

Ют çĕршывсенче

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Африкăла Англи войскисем Чебурбăран çурçĕртерехре Германи войскисен контратакине сирсе янă, çав контратака вăл Тунисра вăрçма тытăннăранпа чи вăйлă контратака пулнă. Противника пысăк çухатусем тӳстернĕ.

Туниспа Бизерта хушшинче союзниксен войскисем нумай мала саваланса кĕнĕ. Противник кашни хулана уйрăм хӳтĕлесшĕн. Союзниксем противник оборонин тĕп линийĕсене атакăланă. Нумай танка пĕтерсе тăкнă. Çавăн хыççăн вара минăсем хурса тухнă вырăнсене минăсенчен тасатма тытăннă.

Англин тинĕсри çăмăл вăйĕсем тăшманăн Тунис патнелле пыракан транспортне атакăланă. Тăватă сутуçлăх карапне тата икĕ эсминеца путарнă.

ЛИВИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Англин Ливири вăйĕсем тата вăйлăрах наступлени тума хатĕрленеççĕ. Англи войскисем малти пайĕсем Эль-Агейлăн хĕвелтухăçĕнчи укрепленийĕсем патне пырса çитнĕ ĕнтĕ. Нимĕçсен оборона линине артиллерирен пеме тытăннă. Противникăн артиллерийĕ те персе тăрать. Союзниксен авиацийĕ противникăн порчĕсемпе çар объекчĕсене темиçе хутчен вăйлăн тапăннă.

Англи авиацийĕн ĕçĕсем

ФРАНКФУРТА ТАПАННИ

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи бомбардировщикĕсем декабрĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Германири тĕрлĕ пунктсене, çав шутра Майн çинчи Франкфурта та, тапăннă.

Истребительсем ĕнер противникăн Францирипе Голландири чугунçул объекчĕсене, войскисене тата огневой точкисене атакăланă.

Тăшманăн самолечĕсем Англие тапăнма хăтланнă. Лондонра сывлăшран тапăнасси çинчен пĕлтернĕ тревога нумай пыман.

ТУРИНА ТАПАННИН РЕЗУЛЬТАЧĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа авиаци Генуяна 6 хут, Турина 4 хут тата Милана 2 хут тапăннă. Çав хуласем çине 15 пин тонна ытла бомба пăрахнă. Италин çарпа промышленность центрĕсене пысăк сиен кӳнĕ. Уйрăм илсе каласан, Турина самолет çинчен ӳкерсе илнĕ ӳкерчĕк çав хулан пысăк районĕсем нумайĕшĕ çĕмĕрĕлнине кăтартать. «Фиат» фирмин завочĕсене, çар материалĕсем тăвакан предприятисене, парксене тата ытти çар объекчĕсене уйрăмах пысăк сиен кӳнĕ.

Фашистла Италин пуçлăхĕ хăраса ӳкнĕ

Муссолини тухса калани

СТАМБУЛ, декабрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Фашистсен корпоративнăй палата текекскерĕн «законсем кăларакан комиссийĕн» ларăвĕнче ĕнер Муссолини сăмах тухса каланă. Çав сăмах вăл союзниксем Германипе Итали коалицине хирĕç пыракан вăрçăн пур фрончĕсенче те ăнăçусем тунă пирки Италин фашистла пуçлăхĕсем хытă хăраса ӳкнине кăтартать.

Муссолини пĕр вăтанмасăр çапла каланă: Германипе Италия Совет Союзĕн хăватне малалла ӳстерсе пыма чарас тесе çеç тата Российăн йышлă продовольствийĕпе чĕртаварĕсене тытса илес тесе çеç Совет Союзне тапăннă, тенĕ. Çав вăхăтрах Муссолини тата çапла каласа хунă: «Российăн çар хăвачĕн пахалăхĕ» маншăн кĕтмен япала пулса тăчĕ, вăл эпĕ шухăшланинчен иртсе кайрĕ, тенĕ.

Муссолини Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене, уйрăмах та Рузвельта, ялакхи пекех вăрçса илнĕ.

Унтан Муссолини Англи бомбардировщикĕсем юлашки вăхăтра Итали хулисене тапăнни çинчен каланă. Вăл çакăн пек пĕчĕклетсе кăтартнă цифрăсем каласа панă: Миланра 2.114 çурта, Туринра—3.230 çурта, Генуяра—11.883 çурта ишĕлтернĕ е сиенленĕ. Муссолини жуликла хăтланса шутланă тăрăх, Италин 400 пин çынна яхăн пĕтнĕ.

Муссолини итальянецсене вĕсен çитес вăхăтра «йывăр асапсем» тӳссе ирттермелле пулассине асăрхаттарнă.

«Черчиллĕн сăмахне, тенĕ Муссолини, ĕненмелле пулать: хуласене пĕтĕмпех эвакуацилемелле пулать. Юлашки сехет килсе çитессе ан кĕтĕр, халех ялсем тăрăх саланма тытăнăр. Хуласене пĕтĕмпех тенĕ пекех эвакуацилемелле. Кам хуласенчен тата промышленность центрĕсенчен аякра пурăнма пултарать —çавсен обязательно тухса каймалла. Хуласенчен çынсене кăларса ямалла, хуласенче салтаксем кăна юлччăр».

Панкрута тухнă фашистла пуçлăх хăйĕн халăхĕнчен хăрани унăн сăмахне витĕр çапса тăрать. Вăл çапла каланă: эпĕ сăмах панине, шантарса каланине Италире ĕненмеççĕ, манăн приказсене пурнăçа кĕртмеççĕ. «Эпĕ,—тенĕ вăл, хăш чухне хăшпĕр авторсем пекех пулса тăратăп: «çынсем çав авторсем çырнине вуланинчен ытла вĕсенчен цитатăсем илсе кăтартаççĕ, вĕсем каланине тунинчен ытла вĕсене итлесе тăраççĕ». Муссолини халăхăн боевой шухăшкăмăлĕ çукки пирки тата итальянецсенчен хавхаланма ыйтма та çукки пирки, çапла ыйтни вăл усăсăр пулни пирки ӳпкелешнĕ. «Хавхаланни вăл, — тенĕ Муссолини, — уйрăм çыннăн пурнăçĕнчи лирикăллă самант пулса тăрать, вăл халăхăн пурнăçĕнче сайра тĕл пулать».

Сталинла Конституци ялавĕпе

Совет Союзĕн çĕнĕ Конституцине йышăнни ултă çул тултарнă куна совет халăхĕсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан Отечественнăй вăрçăн хăрушă кунĕсенче уявласа ирттереççĕ.

1936 çулхи декабрĕн 5-мĕшĕнче Совет Союзĕнчи Советсен VIII-мĕш Чрезвычайнăй съезчĕ Сталин юлташăн докладĕ тăрăх пирĕн социализмлă государствăн çĕнĕ Тĕп Законне йышăнчĕ. Çакă вăл пирĕн çĕршывăн обществăллă-политикăллă пурнăçĕнче, совет халăхĕсен пурнăçĕнче калама çук пысăк событи пулса тăчĕ.

Сталинла Конституци — пирĕн историллĕ çак саманан питех те чаплă документчĕ.

Сталинла Конституцин чаплăхĕ—вăл çĕнтернĕ социализмăн тĕнчери пĕрремĕш Конституцийĕ пулса тăнинче, вăл пĕтĕм истори тăршшĕнче социализмлă строй пуçласа пурнăçа кĕнĕ обществăн тĕп законĕ пулса тăнинче.

Сталинла Конституцин питех те палăрса тăракан енĕ вăл çакă: вăл малашне çĕнтерсе илмелли япаласем çинчен мар калать, вăл халиччен çĕнтерсе илсе пурнăçа кĕртнисене пурте пĕлсе тăракан фактсемпе çирĕплетсе парать.

СССР Конституцийĕ пирĕн совет обществин никĕсĕ пулса тăракан социализм принципĕсемпе тунă. Ку вăл çакна пĕлтерет: Сталинла Конституци Совет Союзĕн экономикăллă никĕсĕ тесе хуçалăхăн социализмлă системине тата производствăн орудийĕсемпе хатĕрĕсен социализмлă харпăрлăхне çирĕплетсе парать. Вăл индустриализацийĕпе коллективизацин Ленинла—Сталинла политики çĕнтернине палăртса парать. Çав политикăна пула пирĕн çĕршывра социализмăн экономикăллă питех те вăйлă никĕсĕ пулса тăчĕ. Çав политикăна пурнăçа кĕртнипе пула Совет Союзĕ индустриллĕ тата колхозлă социализмлă хăватлă держава пулса тăчĕ, хăйĕн никама пăхăнманлăхĕпе ирĕклĕхне тулашĕнчи тăшмансенчен хӳтĕлесе тăма пултаракан держава пулса тăчĕ. Совет Союзĕпе гитлерла Германи хушшинчи вăрçăн пĕтĕм опычĕ халĕ шăп çавна кăтартса тăрать те ĕнтĕ.

Тепĕр енчен илсен, индустриализацийĕпе коллективизацин Ленинла—Сталинла политики çĕнтерни совет халăхĕсене экономика тĕлĕшĕнчен те, культура тĕлĕшĕнчен те чечекленсе ӳсме пыма, мĕнпур ĕççыннисен—рабочисен, хресченсен, интеллигенцин — тулăх пурнăçне çултен çуле хăпартса пыма çирĕп материальнăй никĕс туса пачĕ. Совет халăхĕ экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен çĕнтерсе илнисене палăртса, Сталинла Конституци совет гражданĕсене ĕçлĕх прави, канăву прави, вĕренӳ прави, ватăлсан материальнăй пулăшу илмелли право т. ыт. те çирĕплетсе пачĕ.

Сталинла Конституци совет обществин çак питĕ чаплă уйрăмлăхне палăртса парать: совет обществинче пĕр-пĕринипе туслăн пурăнакан икĕ класс — рабочи класс тата совет хресченĕсем юлнă, унта тата çав классенчен тухнă ĕçлĕх интеллигенцийĕ пур. Çавăнпа та Сталинла Конституци Совет Союзне рабочисемпе хресченсен социализмлă государстви тесе палăртса парать.

Пирĕн çĕршывра совет обществин моральлĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ ӳссе çитĕнчĕ. Çав пĕрлĕх вăл нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан Отечественнăй вăрçă кунĕсенче пирĕн тылăн питех те çирĕп никĕсĕ, совет государствин нихăçан иксĕлми вăйĕн çăлкуçĕ пулса тăрать. Сталинла Конституцин питĕ чаплă уйрăмлăхĕ—вăл питех те интернационаллă пулни. СССР Конституцийĕ вăл чăн-чăнах халăхсен тăванлăхĕпе туслăхĕн Конституцийĕ пулса тăрать. Вăл мĕнпур нацисемпе расăсем пур енчен те пĕртан пулнине çирĕп закон туса хурать. Ленинла—Сталинла наци политикин аслă принципĕсене пурнăçа кĕртсе, СССР Конституцийĕ пур нацисене те, пур расăсене те наци тĕлĕшĕнчен ирĕклĕн аталанса пыма право парать, вăл совет халăхĕсене пурне те общество, государство, хуçалăх тата культура ĕçĕсенче пурнинче те пĕртан правăсем парать. Ку çеç те мар-ха. Сталинла Тĕп Закон вăл граждансем пĕр-пĕр раса е наци шутĕнче тăнине пула вĕсен прависене тӳрремĕнех е урăхла майпа катма е вĕсене ыттисен шайĕнчен ытларах правăсем пама чарать, çапла тунăшăн уголовнăй йĕркепе ответ тыттармалла тăвать, çавăн пекех тата пĕр-пĕр наци е раса ыттисенчен çӳлте тăрать тесе вĕрентнине уголовнăй преступлени тесе шутлать.

Халăхсене пур енчен те аталантарса пымашкăн Совет Союзĕнчи нацисен государствăллă пурнăçне тĕрлĕ формăпа тунă. Совет автономийĕн çак формисем—союзлă республика, автономиллĕ республика, автономиллĕ область, нациллĕ округ—вĕсем çав республикăсенче е облаçсенче, е округсенче пĕрлешнĕ нацисене государство, хуçалăх тата культура тĕлĕшĕнчен ӳссе пыма пур условисем те туса параççĕ.

Ленинла — Сталинла наци политикин аслă та гуманнăй принципĕсем пĕрлĕхлĕ совет государстви системинче нацисен пĕр тăванлăхне шанчăклăн çирĕплетсе параççĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ гитлерла шайккă совет халăхĕсене пĕр-пĕринипе хирĕçтерсе ярасса шанни, кашни нацин националлизмлă реакцийĕ хăй енне турса Совет Союзне шалтан хавшатса çитерĕ тесе шанни тусан пек сапаланса кайрĕ. Гитлерла бандитсем совет халăхĕсен туслăхне хавшатма пултараймарĕç. Совет халăхĕсем, хăватлă патриотизмпа çĕкленсе, ютçĕршыв захватчикĕсемпе çапăçма тăчĕç.

Гитлерла Германия Европăри демократие пĕтерсе тăкнă вăхăтра, нумай халăхсен никама пăхăнманлăхĕпе ирĕклĕхне таптанă вăхăтра пирĕн Сталинла Конституци панă социлизмлă демократизмăн принципĕсем сарăлса ӳсе параççĕ.

Сталинла Конституци çапла калать: мĕнпур граждансем, вĕсем мĕнле класран е нациран тухнине пăхмасăрах, пĕр-пĕринипе тан, правăсем тĕлĕшпе арçынсемпе хĕрарăмсем хушшинче, пурлăхсемпе çуккисем хушшинче, пĕр çĕрте пурăнакансемпе куçса çӳрекеннисем хушшинче нимĕнле уйрăмлăх та çук, тет. Сталинла Конституци пĕтĕм халăх демократизмĕн саманчне пуçласа ячĕ. Ĕççынни депутачĕсен Совечĕсене Совет Союзĕн политикăллă никĕсĕ тесе çирĕплетсе парса, вăл Советсене пĕтĕм совет халăхĕн оргăнĕсем туса хучĕ. Çапла майпа Сталинла Конституци совет власĕн оргăнĕсене халăхпа тата та çывăхарах çыхăнтарчĕ, ĕççыннисене государствăна тытса тăрас ĕçе хутшăнтарма çĕнĕ майсем тупса пачĕ, совет государствине тата ытларах çирĕплетсе учĕ.

Сталинла Конституцин тĕп енĕсем, тĕп уйрăмлăхĕсем çавăн пек ĕнтĕ.

Совет халăхĕсем вăйлăн, юн юхтарса кĕрешсе, питĕ пысăк вăй хурса ĕçлесе тата тĕрлĕ асапсем тӳссе, Сталинла Конституцире çырса хунă чаплă çитĕнӳсене çĕнтерсе илчĕç. Сталинла Конституци йышăннăранпа совет халăхĕсем хуçалăх, культура тата политика тĕлĕшпе нумай çĕнĕ çитĕнӳсем турĕç, нумай нациллĕ совет государствине сарса çирĕплетрĕç.

Гитлерла Германия Совет Союзĕ çине вăрçăпа килни совет çыннисен мирлă ĕçне татрĕ, Октябрьти революцин аслă çĕнтерĕвĕсем умне вилĕмле хăрушлăх кăларса тăратрĕ.

Сталин юлташ каланă тăрăх, Италипе Германи пусмăрçисен программи çакăн пек: вĕсем пĕр раса тепĕрне хуралманнине ӳстерсе ярасшăн, «суйласа илнĕ» нацисем пуç пулса тăмалла тăвасшăн, ытти нацисене пăхăнтарасшăн, вĕсен территорийĕсене тытса илесшĕн, парăнтарнă нацисене экономика тĕлĕшĕнчен чуралантарасшăн, вĕсен наци пуянлăхне çаратса пĕтересшĕн, вĕсен демократиллĕ ирĕклĕхĕсене пĕтерсе хурасшăн, пур çĕрте те гитлерла режим туса хурасшăн.

Акă мĕн параççĕ нацисемпе расăсене халăхсен гитлерла тĕрмеçисем!

Хальхи вăхăтра гитлерла палачсем хăйсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенче тискеррĕн хуçаланса çӳреççĕ. Вĕсем унта çакса вĕлерес, персе пăрахас, заложниксем тытса илес, асаплантарас, концентрациллĕ лагерьсене хупас, чураллă-крепостла йĕркепе ĕçлеттерес, пурне те çаратас тата мирлĕ совет халăхне массăллăн пĕтерсе пырас режим туса хунă. Гитлеровецсем хăйсем умне Украинăри, Белоруссири, Прибалтикăри, Молдавири, Крымри, Кавказри халăхсене чура туса хурас е вĕлерсе пĕтерес задача лартнă.

Паллах ĕнтĕ, çак вăрçăра сăмах СССР Конституцийĕнче çырса хунă питĕ чаплă çитĕнӳсене хӳтĕлесси çинчен çеç мар пырать, кунта совет халăхĕсен пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен ыйту татăлать. Анчах та пирĕн тăван çĕршывăн çар хăвачĕ кунран кун ӳссе çирĕпленсе пырать, ирĕклĕхе юратакан Англия — СССР — Америка коалицийĕ тĕрекленсе пырать, Италипе Германи коалицийĕн çар машини хавшаса пырать. Пирĕн тăван çĕршыв тата унăн Хĕрлĕ Çарĕ хăватлă çар техники пуррипе çеç мар вăйлă, вĕсем тата хăйсен хĕçпăшалĕсем шутĕнче Аслă Сталинла Конституци пуррипе те вăйлă, çав Конституци ялавĕ айĕнче тăрса совет халăхĕсем хăйсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçаççĕ.

Сталин юлташ ертсе пынипе совет халăхĕсем историллĕ пысăк çитĕнӳсем турĕç. Паян та СССР халăхĕсем çакна çирĕп шанса тăраççĕ: хамăрăн аслă çулпуç, полководец — Сталин юлташ ертсе пынипе, эпир нимĕçсен фашистла захватчикĕсене аркатса тăкатпăрах, хамăрăн чаплă Тăван çĕршыва, хамăрăн аслă Сталинла Конституцие сыхласа хăваратпăрах.

Л. МАНДЕЛЬШТАМ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99 ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1119 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58_84 п.